# „Çĕнтерÿ ялавĕ"

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчен тухать

20 (7445) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Хĕл ăсатăвĕн уявĕнчен

## Килех, ырă çуркунне!



**Ĕç çыннисен спартакиадин иртнĕ çулхи çĕнтерÿçи – «Моргаушрайбыт» предприяти.**

Йăлана кĕнĕ тăрăх, Муркашра хĕл ăсатăвĕн уявĕ кăçал мартăн 8-мĕшĕнче иртрĕ. Уяв Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕпе пĕр килнĕ май, вăл татах савăнăçлăрах, сумлăрах туйăнать. Хавас юрă-кĕвĕ янăрать, пурин те çÿпçе тулли хавас кăмăл палăрать.

Уяв район центрĕнчи универмаг умĕнче иртрĕ. Кунти сцена çине чи малтанах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, хуçалăхсемпе предприятисен ертÿçисем, хăнасем улăхрĕç.

Уява уçнă май, район пуçлăхĕ Юрий Александрович çавна палăртрĕ. Район çыннисем чăннипех те ĕçлеме те, савăнма та пултараççĕ. Çавна район кунне халалланă уяв та кăтартса пачĕ. Пĕтĕмĕшле пур енĕпе тенĕ пекех районти ял хуçалăх тата промышленность отраслĕсем иртнĕ çул унччен хинчен ÿсĕмлĕрех ĕçленĕ. Кашнин тăрăшулăхĕнчен, кашниех хăйне шанса панă ĕç вырăнĕнче чуна парса ĕçленинчен килнĕ ăнăçу.

Юлашки вăхăтра районта промышленность продукцине туса илесси ял хуçалăх продукцине туса илессинчен ытларах. Çав вăхăтрах вара камсенчен тĕслĕх илмелли те çук мар. Акă, иртнĕ çул итогĕсемпе ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче Ильич яч. хис., «Свобода», «Оринино» хуçалăхсем малти вырăнсене йышăнма пултарнă. Вĕсем ял хуçалăх продукцине туса илессипе япăх мар ĕçлесе пыраççĕ, кăтартусене ÿстереççĕ. Ытти хуçалăхсен те мал туртăмлă ĕçлеме майсем пур, ытларах тимлени кирлĕ кăна.

Мартăн 8-мĕшĕ – Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе тата хĕл ăсатăвĕпе саламласа район пуçлăхĕ пурне те ырлăх-сывлăх, ăнăçусем, телей сунчĕ.

– Муркашсем ĕçлеме те ĕнентĕмĕр.

Хальхи вăхăтра хĕрарăмсем туман ĕç çук. Районти тĕрлĕ отрасльте ĕçлеççĕ вĕсем. Шанса панă тивĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ. Çавна май Владислав Григорьевич хĕрарăмсене çурхи пĕрремĕш уявпа, пурне те хĕл ăсатăвĕпе саламларĕ.

Уявпа, хĕл ăсатăвĕн кунĕпе саламлакансем татах пулчĕç. Чылай çул хушши КПСС Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă, халĕ районăн хисеплĕ граж-




**Алла-аллăн тытăнар, çурхи куншăн савăнар.**

пултараççĕ, савăнма та сатур,– терĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов.– Çакна район кунне Шупашкарта Чăваш академи драма театрĕнче уявланă май яр уççăн курса

данинĕ В.С. Краснов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин, район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева пурне те çурхи уявпа саламларĕç.

**(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).**

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ

## Хĕрарăм – пурнăç тыткăчи

Çуркунне илемлĕ тапхăр, хĕвел те, ав, кунран кун ăшшăнрах пăхнăн туйăнать. Çак вăхăт Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕпе пĕр килнине татах та илĕртÿллĕрех туйăнать.

Мартăн 7-мĕшĕнче хĕрарăмсен кунне халалланă уяв программи иртрĕ. Унта ял тăрăхĕсенчи хĕрарăмсен канашĕсен ертÿçисем тата хисепе тивĕçнĕ чылай амăшĕсем пухăнчĕç.

Чи малтанах пухăннисене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Хĕрарăмсем



район, республика, çĕршыв аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ. Унăн пурнăçри пĕлтерĕшĕ çÿлти шайра, вĕсем кирек хăш отрасльте те арçынпа тан вăй хума пултараççĕ. Акă, 2007 çула Ача çулĕ тесе палăртни те ачасемпе амăшĕсем çине ытларах тимлĕх уйăрмаллине пĕлтерет. Çамрăк ăрăва ÿстерсе вĕсен сывлăхне сыхласа хăварса, пурнăçне çутăрах тăвассинче хĕрарăм тÿписĕр май çук. Çавăнпа та çак ыйтусене татса пама конкретлă мерăсем йышăнаççĕ. Ырă пуçарăвăн малашлăх кăтартăвĕсене сисме пуçларăмăр та ĕнтĕ.

Хисеплĕ хĕрарăмсене çавăн пекех район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ, хĕрарăмсен районти канашĕн ертÿçи А.Е. Андреева, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин, Муркаш райповĕн ертÿçи Б.В. Андреев, Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ К.Л. Валицкая тата ыттисем те саламларĕç. Чи



ырă сăмахсем каласа пурнăçăн анлă çулĕнче пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнма сунчĕç.

Уява пухăннисене тав туса район пуçлăхĕ, Муркаш райповĕн ертÿçи, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ чечексем парнелерĕç. Илемлĕ чечексем пекех илĕртÿллĕ пулма сунчĕç. Çавăн пекех ĕçре уйрăмах палăрнисене Ю.А. Иванов Хисеп хучĕсем парса чыс турĕ.

Муркаш тăрăхĕ пултарулла çынсемпе чăннипех те мухтанма пултарать. Акă, Муркашри "Визит" суту-илÿ çурчĕ" чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ Лилия Валерьевна Николаева "Чи шанчăклă партнер" номинацире çĕнтерсе Раççей шайĕнче те малти вырăна тухма пултарчĕ. Çавăн пекех Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валентина Алексеевна Любимова "Пултаруллă хĕрарăм – ял тăрăхĕсен пуçлăхĕ" номинаци çĕнтерÿçи пулчĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕç. Ыттисене те малалла туртăнма сĕнчĕç.

Уява хутшăннисене "Солнышко" ача садне çÿрекенсем, Муркаш шкулĕнчи ачасен коллективĕ тата Мăн Сĕнтĕрти "Янаш" ушкăн хаваслă юрă-кĕвĕ, илĕртÿллĕ ташăсем парнелерĕç.

Уява ирттерме пулăшаканĕ Муркаш райповĕ пулчĕ, пылак çимĕçсемпе хăналарĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ÿкерчĕксенче: уява хутшăннисен пĕр ушкăнĕ; ача садне çÿрекенсем те хисеплĕ хĕрарăмсене саламлама килсе çитрĕç.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ, социаллă аталану пайĕ, Юнкă тата Йÿçкасси ял тăрăхĕсен администрацийĕсем, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» патшалăх унитарлă предприятийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн январĕн 30-мĕшĕнчи 24 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе награлăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Татьяна Петровна АЛЕКСЕЕВАНА**, Оринин шкулĕн директорĕн воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумне;

– **Валерий Михайлович ВАСИЛЬЕВА**, Чуманкасси шкулĕн директорне.

2. Вырăнти самоуправлени органĕсенче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн:

– **Тамара Павловна ПАВЛОВАНА**, Йÿçкасси ял тăрăхĕн ертсе пыракан специалистне;

– **Раиса Михайловна РОМАНОВАНА**, Юнкă ял тăрăхĕн çарпа учет сĕтелĕн инспекторне;

– **Роза Егоровна СЕДАТЛОВАНА**, район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн тĕп специалистне.

3. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн:

– **Валентина Владимировна МАКСИМОВАНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин весовщикне;

– **Владимир Андреевич ХРАМОВА**, ĕç ветеранне.

4. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх отраслĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Николай Александрович ШИШКИНА**, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă предприятийĕн директорне.

5. Пĕлĕве аталантарассипе нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Елизавета Ивановна ЗАЙЦЕВАНА**, Çатракасси шкулĕн библиотекарьне.

Йышăну

## Çурхи ейĕве хатĕрленсе

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн февралĕн 22-мĕшĕнчи "2007 çулхи çурхи ейĕве ирттерсе ярассине йĕркелесси çинчен" кăтартăвне шута илсе çурхи ейÿ вăхăтĕнче тĕрлĕрен чрезвычайлă лару-тăруран асăрханма, çынсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме, экономика объекчĕсене тĕрĕс-тĕкел ĕçлеме условисем туса пама район администрацийĕн пуçлăхĕ "2007 çулхи çурхи шыва йĕркеллĕ ирттерсе ярассине йĕркелесси çинчен" йышăну тунă. Ăна пурнăçлама ятарлă комисси çирĕплетнĕ. Комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г.Никитин. Йышăнура ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприяти-организацисен ертÿçисене çак тапхăрти чрезвычайлă лару-тăруран, пушар тухаслăхран çирĕп асăрханма тĕллевлĕ пулма хушнă.

**Хамăр инф.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Муркашри выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станцире ĕçлекен Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ветеринари врачне **Галина Тимофеевна КИРИЛЛОВАНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр.

Пурнăçăр тулăх та вăрăм пултăр. Иксĕлми вăй-хал, тулли телей, кулленех хĕвеллĕ те çутă кун, пархатарлă çирĕп сывлăхпа ĕмĕрхи ыр кăмăллăх сунатпăр сире, хисеплĕ Галина Тимофеевна!

**Салампа пĕрле ĕçлекенсем.**

---

Оринин ял тăрăхĕнчи Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан пирĕн юратнăран та юратнă хуньама **Василиса Федоровна МИХАЙЛОВА** паян 70 çул тултарать. Çурхи çак илемлĕ кун ячĕпе саламласа эпир ăна вăл пирĕншĕн тунă ĕçĕсемшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Хисеплĕ хуньама! Эсĕ ĕмĕрĕпех "Восток" хуçалăхра ĕçлесе мăшăрупа виçĕ ывăлпа икĕ хĕр çуратса ÿстертĕн, кашнинех тивĕçлĕ пĕлÿ парса çĕршыва юрăхлă турăн. Паян вĕсен кашнин хăйĕн çемйи. Вĕсем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче ĕçлеççĕ, пурăнаççĕ пулсан та, эсĕ упракан тăван кил ăшшине самантлăха та манмаççĕ.



Тавах сана, эсĕ пурришĕн,
Пире кĕтсе алăк уçнишĕн,
Алтăрпалла сăра панишĕн,
Йывăрлăхра алă тăснишĕн.

**Саламлаканĕсем: юратакан кĕрĕвĕсем.**